Инв. № 226 30—286

ЂĂВАШ РЕСПУПЛ. ХАЛĂХ ÇУТĔÇ КОМИССАРИАЂĔ

Ç. ШĂПЂĂК

# АЂАСЕНЕ ВЫЉАМАЛЛИ ЙАПАЛАСЕМ

(ТЕТТЕСЕМ)



ЂĂВАШ КĔНЕКИ УЙРĂМĔ

Шупашкар ◆◆ 1930 çул

# ЂĂВАШ КĔНЕКИ УЙРĂМĔ

**ШУПАШКАР — ЧЕБОКСАРЫ**

**Красная площадь, книжный магазин „НОВАЯ КНИГА“**

**Кашни ĕçлекенĕн, кашни хресђенĕн ЂĂВАШ КĔНЕКИ УЙРĂМĔ КĂЛАРНĂ çак кĕнекесене илсе вуламалла:**

**В. И. Ленин** — Копператси çинђен вĕрентни . . . . . . . . 18 п.

**В. И. Ленин** — Çĕрпе хресђен çинђен . 28 п.

**В. И. Ленин** — Екккономĕкăн çĕнĕ политтĕкĕ çинђен . . . . 10 п.

**В. И. Ленин** — Йалти ђухăнсем çинђен 14 п.

**В. И. Ленин** — Совет патшал. çинђен 20 п.

**В. И. Ленин** — Хĕрарăм çинђен вĕрентни . . . . . . . . 20 п.

**В. И. Ленин** — Сахал пулин те, лайăхрах пултăр . . . . . . 24 п.

**В. И. Ленин** — Ĕçлекенсемпе хресђенсен çыхăнăвĕ çинђен . 13 п.

**В. И. Ленин** — Патшалăх кăпиталисăмĕ çинђен вĕрентни . . . 38

**Сталин** — Ленинпа ленинисăм çинђен 40 п.

В. И. Ленина аса илнисем . . . . . 35 п.

Кусемсĕр пуçне В. И. Ленин çырнă ытти кĕнекесем те пур. Вĕсем çинђен тĕплĕрех пĕлме — катталăк ыйтса илĕр. Ăна укçасăрах йараççĕ.

**В. И. Ленин кĕнекисен хакне йўнетнĕ!**

ҪĂВАШ РЕСПУПЛĔКĔН ÇУТĔÇ ХАЛĂХ КĂМИССАРИАҪĔ

Ç. ШĂПҪĂК

# АҪАСЕНЕ ВЫЉАМАЛЛИ ЙАПАЛАСЕМ

(ТЕТТЕСЕМ)

ҪĂВАШ КĔНЕКИ УЙРĂМĔ
Шупашкар — 1930

## УМĔНХИ CĂMAX.

Аҫана кирлĕ пек, тирпейлĕ пăхса ҫитĕнтерессн ҫине ҫийелтен кăна пăхни вăл—пирĕн калама ҫук, пысăкран та пысăк ҫитменлĕх.

Тирпейлĕ, лайăх пăхса ҫитĕнтернĕ аҫапҫа—ĕҫхалăхĕн ҫирĕп шанҫăкĕ, ҫирĕп вăйĕ пулаť.

Епĕр хаҫ комунисăмăн ҫемйи, сотсиалисăмăн никĕсĕ. Ҫавăнпа та пирĕн ҫирĕп, хăстарлă, ăстăн йенҫен те йусавлă пулмалла. Кăна пирĕн сăпкари вҫасенҫенех туса пымалла.

Наҫар, айван халăхăн нимĕнле ҫирĕплĕх те пулма пултараймаст. Ҫавăнпа та вăл ĕҫре те кирлĕ таран ĕҫлесе, ҫителĕклĕ пулăшу параймаст.

Пĕҫĕкренех наҫар, айван ҫитĕннĕ ҫын шкулта та вĕренеймест, ҫынсемпе те пĕрлешеймест. Ҫавăнпа та вăл пĕҫҫен ҫӳрекен, кăнттам, найан ҫын пулаť. Хăй сахалтарах ĕҫлеме, ҫынсен вăйĕпе пурăнма йуратакан пулаť.

Ҫакăнтан ĕнтĕ аҫасене пирĕн мĕнле пăхса ҫитĕнтермелли лайăх курăнса тăраť. Аҫасене пирĕн пĕҫĕкренех ĕҫе йуратакан, ҫынпа пĕрле ĕҫлеме килĕштерекен, ĕҫе йурăхлă, ҫирĕп, маттур ҫынсем тума тăрăшмалла. Паллах, ку ĕҫ—ҫăмăл ĕҫ мар. Анҫах, ҫине тăрсах тăрăшсан, тума пулатех.

*Автăр.*

ТИПОГРАФИЯ ШК. ФЗУ ПРИ ЧУВАШГИЗЕ, ЧЕБОКСАРЫ, КАНАШСКАЯ, 16.

ЧУВАШЛИТ № 2041. ЗАКАЗ № 1147. ТИГАЖ 3000

## Теттесем мӗншӗн кирлӗ.

Сывлӑхлӑ ађа кирек хӑшӗ те выђама йуратат̆. Выђама йуратнишӗн кӑна марха, вӑйӑ вӑл—шкул ҫулне ҫитеймен ађасемшӗн—тӗп ӗҫхалӗ, вӗсен малтанхи ӗҫӗ пулса тӑрат̆. Ађасен пӗр вырӑнта ларас килменни, пӗрмайах мӗн те пулин тӑвас килни, мӗн те пулин ӗҫлес килни, пуринђен ытла, вӑйӑра палӑрат̆. Ҫавӑнпа та пирӗн вӑйӑ ҫине тӗплӗрех ҫавӑрӑнса пӑхмалла пулат̆: ађасемшӗн вӑйӑ вӑхӑта выђаса иртерни кӑна мар, сарӑмсӑр ӗҫ те мар. Ађапђа лайӑх, тӗрӗс ӳстӗр, мӗн те пулин тутӑр, пӑрмайах хӑйӗн шӑмшакне пӗр вырӑнта тӑратмасӑр выђатса—ҫирӗплетсе пыма вӗрентӗр тесен, пирӗн вӗсен вӑййисене тӗрӗс илсе пыма тӑрӑшас пулат̆. Вӑйӑ вађђи йапаласем, выђамали теттесем кирлӗ. Ађапђана лайӑх, хӑйне виҫеллӗйурӑхлӑ тумтир кирлине, уйрӑм апат-ҫимӗҫ кирлине, пурнӑҫӑн уйрӑм йӗркисем кирлине епӗр лайӑх пӗлетпӗр. Ҫавӑн пекех пирӗн вӗсем мӗнле, мӗнпеле выђамаллине, вӗсем выђамалли теттесем мӗн йеверлӗ пулмаллине те пӗлес пулат̆. Ађапђа, пуринђен ытла, выђамалли теттесене йуратарах парат̆, вӗсене ҫывӑх тӑрат̆.

Аҕапҕасем выҕакан вӑйӑ ҫине, вӗсен теттисем ҫине ҫитӗнне ҫынсем ҫийелтен кӑна пӑхма вӗреннӗ: „Аҕа кирек те мӗнпе йӑпанса лартӑр, анҕах, ан макӑртӑр“ теҫҫӗ. Капла шухӑшлани тӗрӗс мар. Пур вӑйӑ та пӗр пек пулмасӑ: хӑш-пӗр выҕамалли теттесем сийен те кӳме пултараҫҫӗ. Ун пек теттесем аҕисене те, ашшӗ-амӑшне те макӑртса хӑварма та пултараҫҫӗ. Ҫавӑнпа та аҕапҕа ваҕҕи теттесене лайӑх пӗлсе туйанас, тӑвас пулаӑ: илсе, туса панӑ тетте аҕапҕана выҕама пулӑштӑр, ун кӑмӑлне пӗтӗмпех тултартӑр, ку вӑййа пӑрахса, урӑх, ӑна выҕама йураман вӑйӑсемпеле ан выҕатӑр. Пӗҕӗкҫеҫ аҕасен вӑййипеле пӑр ак весенҕен аслӑрах аҕасен вӑййисем урӑхларах пулаҫҫӗ. Урӑхларах выҕаҫҫӗ вӗсем.

3 - 5 ҫулхи пӗҕӗк аҕа вӑййинҕе мӗн курма пултаратпӑр епӗр? Ҫу вӑхӑтӗнҕе аҕасем ҕас-ҕасах тусан ҫинҕе выҕама йуратаҫҫӗ. Вӗсем ӑна вӑйӑ вырӑнне мар, ҕӑн-ҕӑн ӗҫ вырӑннех хурса выҕаҫҫӗ. Пӗри тусана пӗр ҫӗре купалаӑ. Ӑна тепри пулӑшса пыраӑ. Ҫапла вара вӗсен пӗр купа тусан пулса тӑраӑ. Ҫав вӑхӑтрах вӗсем килхушшинҕи ҫавӑн йеверлӗ ӗҫе те аса илме пултараҫҫӗ. Сӑмахран: хӗраҕа пулсан, амӑшӗ ҫӑкӑр пӗҫернӗ вӑхӑтра кункӑра ҫине ҫӑнӑх купаланине аса илет; ҫав вӑхӑтрах тусана пӳрнесем витӗр йухтарса аланӑ пек тӑваӑ. Ун йулташӗсем вӑл ӗҫленине ҕӑн-ҕӑн ӗҫ вырӑннех

хурса асăрхаса тăраççĕ. Йулташĕ ĕçленине кура ђăтаймасăр вĕсем те ĕçе тытăнаççĕ.

Ђăн-ђăнах çăнăх аллансă пекех вĕгĕ тусан çинђен шултăрарах тăпра катăкĕсене ирте-ирте пăрахаççĕ. Вĕтĕ тусансене ывăç çине хурса тыта-тыта пăхаççĕ. Куна вĕсем амăшĕсем çăнăх аллансă ђух çапла тунине аса илсе тăваççĕ.

Ађапђа ытти йапаласемпе те çавах выљаť, йарса илет, йапаласене пăса-пăса купалаť, вĕсене хыпашласа пăхаť, сарса хураť, вырăнтан вырăна куçарса хураť, хупаť, витет, уçаť, шаккаса пăхаť, туртаť. Çутăрах йапаласене йарса тытаť, вĕсен сассине итлесе пăхаť. Çапла вара вăл пурăнан пурăнăçра пулма пултаракан йапаласемпеле паллашса, вĕсемпе вĕренсе пыраť. Кирек те мĕн ĕçлеме, выљама, итлеме, пăхса асăрхама, шăршласа пăхма, йапалана сăнамалла туса пăхма вĕреннĕ пек пулаť.

Ђăнах та епĕр, çитĕннĕ çынсем те, ĕçе çаплах ĕçлетпĕр. Йăвăçран йапала мĕн тăвас пулсан, ăна виçсе пăхатпăр; тӳррипе кукăррине пĕлме куç умне тытса йăвăçа тăрăххăн пăхатпăр. Тĕмеске вырăнтине вартаса, йе савапа саваласа, тӳрлетме тăрăшатпăр.

Çапла вара, çитĕннĕ çынсен ĕçĕпеле ађасем выљђакан вăйăсем пĕр йевĕрлех пулса пыраççĕ. Çавăнпа та ађасен вăййине йертсе пырасси çитĕннĕ çынсемшĕн, ађа ашшĕ-амăшĕсемшĕн пысăк ĕç пулса тăраť.

## Вăйăра ђăрмантармалла мар.

Паçăрах: ађасем тусан çинђе выљама йуратаççĕ, терĕмĕр. Çавăн пекех вĕсем ытти тасамар йапаласемпе те выљама пултараççĕ. Хăш-пĕр ђухне тулта мар, пўртре те кирлĕ мар йапаласемпе выљама тăраççĕ. Çавăнпа та çитĕннисем, ашшĕ-амăшĕсем вăйă вăхăтĕнђех ађисене кăçкăрса, хăратса вăййа пăрахтарма тăрăшаççĕ.—«Каллех урайне çўплетĕр», «Каллех илсе-кĕрсе тултарнă», «Кĕпўсене вараласăр», «Çиппеле мĕн тăватăн», «Шаймăк». Ађасем хĕрсе выљанă вăхăтра ђас-ђасах çак сăмахсем илтĕнеççĕ. Ађасем вара кăмăлсăр пулса вăййа пăрахаççĕ. Хăйсем тăвас тесе шухăшланă ĕç-вăйа туса пĕтерейменеççĕ. Кун хыççăн ашшĕ-амăшĕсем çине кăмăлсăр пăхса илеççĕ. Çакăнтанах çилленме, шăрђăкланма та вĕренсе кайма пултараççĕ. Çакăнтанах ађасен ђас-ђасах нервă ђирĕ те пуçланса кайаť.

Паллах, ађанăн таса пурăнма, тирпейлĕ-тĕплĕ пулма вĕренсе, хăнăхса пымалла. Çавăнпа та унăн йаланах хăй выљанă йапаласене те выљанă хыççăн пуçтарса хума тăрăшмалла. Ку ĕçе те пирĕн хамăрăнах вĕрентсе тăмалла.

## Ађана хăйне шухăшлаттармалла.

Çавăн пекех вăйă вăхăтĕнђе ађасем çитĕннĕ çынсенђен ыйтнисене те тавăрса пама тытăнарах тăрас пулаť. Вĕсем ыйтса тĕпђеме йуратаççĕ.

— Лашанăн тăвата ура. Пирĕн мĕншĕн иккĕ çеç?

— Сысна мĕншĕн шĕвĕр сăмсаллă?

— Çак кĕленђе катăкĕ мĕншĕн симĕс, йе мĕн тĕслĕ?

Çитĕннисем вара ађасем çапла ыйтнишĕн савăнса, вĕсен ăсăшĕн хĕпĕртесе сасартăк каласа параççĕ. Ађа сасартăк пĕлег. Уншăн вара вăйă хастарлăхĕ пĕтсе те лараť. Çакăнтанах вара ађа хăй шухăшлама пăрахакан пулаť. Çитĕннисенђен ыйтма вĕренет. Хăш-пĕр ђух тултан пўрте ђупса кĕрег. Йе пўртрен тула тухаť. Çав йапаласене ыйтса пĕлесшĕнех çўрет вăл çапла. Мĕншĕн тесен, хăй шухăшлама-сăрах пĕлессе вăл лайăх шанса тăраť. Ашшĕ, йе амăшĕ ĕнер, йе паçăр каласа панине витĕр астăваť, манмасť. Çак йĕрке, çак хăнăху вара ађанăн пурнăçĕнђе çаплипех тăрса йулаť. Ку—çынна пĕтерекен хăнăху пулаť. Çакна астуса тăрса çитĕннисен ађасен ыйтăвĕсене асăрханарах тавăрса памалла. Ађа хăй ĕçлеме, хăй шухăшлама тăрăштăр, çынсенђен ыйтма ан вĕрентĕр.

— Атте, пирĕнпе ма выђамастăн?—тесе ыйтсассăн.

— Камсен ашшĕ выђаť ађапа?—тесе тавăрмалла.

Ађасем ыйтакан ыйтусем çине кирек хăçан та çапла майлăрах тавăрса пама тăрăшмалла. Капла тунипе вĕсем аса илме, шухăшлама вĕренеççĕ. Сăмахран: ђимха, кам ашшĕ выђатђĕха? тесе вăл

ҫылайҫҫен шухăшласа тăма пултарать. Хăйĕн йулташĕсен ашшĕсене ăшĕнҫе тĕрĕслесе тухать. Ҫитĕннĕ ҫын аҫасемпе выљасах ҫӳреймест. Ҫавăнпа та ашшĕ «выљамастăп» тенĕ пулсан: мĕншĕн выљамастăн?, тесе ыйтатҫĕ унтан аҫи. Ҫавăн пек вара вĕҫĕмсĕр ыйту кайма та пултарать.

Ҫакăнтанах аҫа вĕҫĕмсĕр, татти сыпписĕр ыйтусем пама вĕренсе кайать. Ашшĕ-амăшĕ ответ панине вăл хак хурса та пыраймасть. Ахаљ ҫеҫ, сăмахпа ҫатăлтатас килнипе ҫеҫ иртерсе пырать. Аҫана хăйне шухăшлаттарма вĕрнтсен апла пулмасть. Вăрахăн, йапалана ҫăн-ҫăн хак хурса шухăшлама вĕренет. Ҫакă аҫанăн пурнăҫ тăршшĕпех йулать. Ку—усăллă пулать.

## Аҫана мĕнле теттесем кирлĕ.

Аҫана хăйне кирлĕ-йурăхлă теттесем илсе парас пулать: ҫăмăр йапаласем, ункăсем, пĕҫĕк кустăрмасем, йăвăҫран тунă ҫăмартасем, меҫĕксем аҫасене кустарса выљама лайăх; йăвăҫ мăлатуксем, йăвăҫ пуртăсем, туйасем—вĕсем шаккасан сасă параҫҫĕ; пĕҫĕк армансем, кирек мĕн ҫавăрăнса тăракан теттесем, вĕсене ҫавăрса йарса, вĕсем ҫавăрăннине пăхса тăма пултараҫҫĕ; урапасем, коропкăсем—вĕсене тийесе туртса ҫӳресе выљатҫăр; хытă хутран, йе йăвăҫран тунă хупăлҫаллă коропкăсем, уҫса хупмалла пуканесем, пиҫкесемпе—вĕсемпе

уçмалла-хупмалла выђатђăр. Пĕђĕк хăнкăрмасемпе шăнкăравсем, йăвăçран тунă шăхлиђсем—вĕсен тĕрлĕрен сассисене итлеме пултарђђăр; лашалла выђанă ђух тилхепесем тума, сикмеллисем тума кантăрасем кирлĕ. Çаксене пурне те килтех тума пулать. Ађасем вĕсене хăйсемех те тупаççĕ.

Выђамалли теттесем хитре, çутă йăлтăркка сăрăпа сăрланă пулмалла. Хитре патаксемпе выђаса ађа хăйĕн куçĕсене хитре йапаласене вĕрентет. Теттене йăвăçран тунă пулсан, унăн çийĕ йап-йака, çап-çутă пулма кирлĕ. Çутă сăрă ађашăн илемлĕн-хитренĕн курăнать, йака тетте ађана тытса, хыпашлаттарса пăхтарать, лайăхăн туйăнать. Çапла вара ађа хăйĕн куçĕсемпе аллисене хăнăхтарса, çивĕђлентерсе пырать. Çавсенђенех ађа йăвăртарах вăйăсене те вĕренме тытăнать. Пысăкланарах пынă çемĕн унăн вăййи те урăхланса, пысăкланса пырать. Ађа мĕн ђухлĕ çитĕнсе пырать, çавăн ђухлĕ хăйĕн вăййине тĕрлĕрен урăх йапаласем кĕртсе тултарать. Майĕ-майĕпе вăл йапаласене палласа кăна мар, вĕсен, уйрăмлăхĕсене те, çыпăçуллăхĕсене те сăнаса пырать.

## Пысăк теттесемпе пĕђĕк теттесем.

Ађасем выђакан йапаласем пысăккисем те, пĕђĕккисем те пулма пултараççĕ. Урамра, кил хушшинђе, пӳртре, выђаса çӳрекен ађасем çине пăхсан, есĕр çакна курма пултараттăр—кирек хăш ађа та алра

мĕн те пулин тытнах, ун алли пушă çӳремест: пĕђĕк йапалана вăл алла, ывăç тупанĕ çине илет; пысăкрах йапалана, çĕклемпе йăтнă пек, ытампа илет. Пысăкрах-йăвăртарах йапаласемпе выљанă вăхăтра ађа савăнса кайать. Çавăнпа вара вăл туртса пынине, йăтса пынине, йапалана пĕр вырăнтан тепĕр вырăна куçарнине кала-кала парать. Хăйĕн урапи çинђе, çунашки çинђе, йе пĕђĕк арђапа йапала йăтса-туртса пынă ђух вăл мекĕрленсе хăйĕн вăйне кăларать. Вара çавăнпа мухтанать. Апла пулсан еппин ађана пысăкрах, пăртак йăвăртарах йапаласем те пама йурать, анђах йапали унăн вăйне виçеллĕ пулмалла. Урапан, çунашкан туртса пымалли кантри туртса пыма канлĕ пултăр; аран тухса каймалла, йе алла кастарса ыраттармалла ан пултăр. 3—4 çулхи ађана пĕр 3—4 кĕренке йăвăрĕш йапала пама йурать, вăл ăна туртса пыма пултарать.

## Пуканесемпе выљăх йеверлĕ теттесем.

Тăват çулхи ађа пушăт хупписенђен выљăх кĕлеткисем, патаксенђен çын кĕлеткисем, тăмран кайăк-кĕшĕксем туса тата ыт. вăйăсене те выљама тытăнать. Паллах ĕнтĕ, ађа хăй таврашĕнђе мĕн курса-илтет, çавна туса пăхма тăрăшать, унăн хăйĕн вăййине паллăрах йапаласем кĕртес килекен пулать. Вăл вăйăра епĕр çынсене те, выљăхсене те курма

пултаратпăр. Аҫа вутсыппине те йе лаша, йытă, ҫын вырăнне хурса выҫаť, ăна етем йевĕрлĕ пукани те, выҫăх йевĕрлĕ пукани те тупса, туса пама пултаратпăр.

Ку хушăра йăвăҫран тунă тетте-пуканесем ҫылай сутма пуҫларĕҫ. Вĕсем хушшинҫе: аҫасем те, салтаксем, те пионерсем те пулкалаҫҫĕ. Вĕсене аҫа туртса, йăтса ҫӳреме йуратаť.

Ҫума, шыва кĕртме, тата урăх майсемпе те тĕрлĕ вăйăсем выҫама пултараť.

Пĕҫĕк аҫасем ҫемҫе пуканесене йуратаҫҫĕ: вĕсене алра тытма лайăх, тата тытса пăхма та, алпа аҫашласа, шăлса пăхма та паха. Вĕсем йăвăҫран тунисем пек мар, ҫăн-ҫăн етем, йе выҫăх йевĕрлĕрех пулаҫҫĕ.

Анҫах тутăр-пир татăкĕсенҫен тунă ҫемҫе пуканесем ҫасах вараланма-хуралма пултараҫҫĕ, вĕсене таса усрама хĕн. Ҫавăнпа та илнĕ ҫунех вăл мĕнле таварне лайăх пăхса, пĕлсе илес пулаť. Хуралсан-варалансан ҫийелтине хывса ҫума май пултăр. Ҫемҫе пуканесене килте тусан аван, ху пĕлнĕ пек виҫсе касан та, варрине пăҫăкă кĕрпи, таса ҫĕтĕк-ҫатăк, йе ҫĕрмамăкĕ тултаран. Паллах килте, хамăр тунă пуканесем илемлех пулма пултараймаҫҫĕ. Анҫах пасартан илнĕ пуканесем ҫумĕнҫе тĕрлĕрен тасамарлăхсем, ҫир-ҫĕрсем те пулма пултараҫҫĕ. Ҫавăнпа та, илемшĕнех таҫти

тасамарлăха аҫана илсе паратҫен, килте туни авантарах пулаҭ.

Выҫăх кĕлеткиллĕ теттесем аҫапăҫана выҫăхпа хăнăхтарма пултараççĕ, выҫăхсене йуратакан тăваççĕ. Çав вăхăтрах тата выҫăх-ҫĕрлĕхе пăхса усрама хатĕрленеççĕ. Выҫăх кĕлеткиллĕ теттесем ытла та ҫăн-ҫăн выҫăхсем сăнлах пулмасан та пыраҭ, мĕншĕн тесен, аҫасене вăл теттесене ăслăлăха вĕрентĕр тесе памаççĕ, хăй вăййинҫе çав выҫăхсемпе хăнăхса пытăр, тесе кăна параççĕ. Теттесене çирĕплĕх, тасалăх тĕлĕшĕнҫен илсессĕн, пуринҫен те ытларах, лайăх сăрăсемпе илемлĕ сăрланă пулсан, йăвăçсенҫен туни лайăхрах. Сăмахран: лашапа ĕне, йытăпа кушак, ҫăхăпала ҫĕпписем, хурсемпе кăвакалсем, кушаккайăксем (шăшисем).

Пĕҫĕк аҫасене вăл хăй пĕлекен выҫăхсене парас пулаҭ: вĕсемпе выҫани аҫана выҫăхсемпе паллаштарни кăна мар, хăш-пĕр ҫухне вĕсенҫен хăрама пăрахма та пулăшаҭ.

Йăвăçран тунă тетте-выҫăхсем ҫăмăртарах та, çинçерех те пулаççĕ: аҫасем ҫăмăртараххине-самăртараххине йуратарах параççĕ, вĕсем çирĕпрех те, хыпаласа, тытса пăхма та лайăххăн туйăнаççĕ, хитри те хитререх. Çавăнпа та теттесене илес-тăвас пулсассăн çавăн йевĕрлĕреххисене илсе пама тăрăшас пулаҭ. Аҫашăн теттесем йăпанмалла йапала кăна мар, вĕсене шухăшлама, пурнăç йĕркисене

вĕренме пулăшаççĕ. Çавăнпа епĕр аҕа теттесемпе мĕнле выљанине асăрхаса, пĕлсе тăрса, мĕнле теттесем кирлине сăнаса, теттесем тĕлĕшĕнҕен вĕсене йаланах пулăшса пымалла.

## Теттесен вырăнĕ.

Теттесен хăйсен вырăнĕ, хăйсен кĕтгесси пулмалла. Унта аҕа хăй пуç пулса ĕçлетĕр, ăна никам та пырса ан канçĕрлетĕр. Теттесене пуçтарса хумашкăн йе сентĕре, йе пĕҕик шкап, йе арҕа пулмалла. Аҕана тетте илсе, туса парас çĕрте тата акă мĕне хытă астăвас пулать: аҕа выљакан теттесем мăн çынсем тыткалакан йапаласенҕен уйрăмах пулмалла мар, килте мăн çынсем тыткалакан йапаласемпе пĕр манерлĕрех пулмалла. Аҕана тетте илсе, туса панă та çитет, унтан тасалтăм халь, урăх мана антăратмасть, тесе шухăшламалла мар.

Çитĕннĕ çынăн аҕа выљакан вăйăри йапаласемпе пуринпе те интересленмелле. Вара вăл хăйех теттесене аҕа йепле йуратнине, теттесенҕен вăл мĕне вĕреннине, хăнăхнине, вĕсемпе мĕнле выљама кирлине лайăх асăрхама пултарать.

Теттесем ваљҕи уйрăм вырăн хатĕрлени аҕасене тирпейлĕхе вĕрентет, илемлĕхе хăнăхтарать. Кунта çитĕннисен аҕасене пулăшу парса тăмалла.

Аҕана пĕр вăхăтрах темиçе тетте илсе, туса пама йурамасть. Теттесем нумаййипе аҕа ывăнать

вĕсене вăл çийелтен анђах пăхма вĕренет, çĕнĕрен çĕнĕ илсе, туса парасса кăна кĕтекен пулаť. Нумай йапаласемпе ађа пăсăлса кайма пултараť: ађашланса кутăнланакан пулаť, хăйех йапаласене те йуратма пăрахаť, çийелтен кăна пăхма тытăнаť. Вăл вара пурăнан пурнăçра та çаплах йулма пултараť. Çавна манас пулмасť.

## Ваннă теттесем çинђен.

Ваннă-çĕмĕрĕлнĕ теттесене йе йусаса пама тăрăшмалла, йе пĕтĕмпех кăларса пăрахмалла. Мĕншĕн тесен, ађа вĕсем çине кирлĕ мар, йурăхсăр йапаласем çине пăхнă пек пăхма вĕренет, вĕсем урăх кирлĕ мар тесе шухăшлаť. Хăш-пĕр ђухне ађа ваннă-çĕмĕрĕлнĕ йапаласемпех выљаť, вĕсене вăл ытараймасť, йуратаť. Анђах вăл ваннă йапалан пайĕсем, ађана çывăх пулсан кăна пулма пултараť. Урапасем-кусатрансем çине тунă, кўлсе тăратнă лашана ађа хăйпăтса илет те, урапине туртса-кустарса çўреме, кантрасемпе çавăрма тытăнаť. Хаљ ĕнтĕ лаши те çирĕп тăракан пулђĕ, ун çине ларма та йураť, кўлме те май пур. Лашанне малтан кўлнĕ хатĕрсене пăрахаť те, хăй хатĕрĕлесе, çирĕп кантрасем тупса хăйне кирлĕ пек, хăйне килĕшнĕ пек кўлсе хураť. Çавăнпа та, кирек хăçан та, ваннă-çĕмĕрĕлнĕ теттене ађа ваннăшăн мар, хăйне кирлĕ пулнă пек пулнăшăн йуратаť.

Тетте—аҫана ытти аҫасемпе хутшӑнса выљама пулӑшнине ашшӗ-амӗшӗн йаланах асӑрхаса тӑмалла.

Аҫасене выљама пысӑкрах меҫкӑ аван, вӑл меҫкӑ вӗрсе хӑпартни пулсан тата та лайӑхрах. Ҫавӑн пек меҫкӑ выљама та йӑвӑрах мар, тата унпала выљанӑ ҫух савӑт-сапасене, карӑнтӑксене ҫӗмӗрессрен те, куҫ-пуҫа ыраттарасран та хӑрамаллийех ҫук. Ҫитменнине тата ку меҫкӑпа пӳртре те выљама пулаҭ. Ҫав меҫкӑпах аҫасем тӗрлӗрен вӑйӑсене вӗренме пултараҫҫӗ.

Аҫа теттесемпе хӑй кӑна мар, ытти аҫасемпе пӗрле те выљаҭ. Хӑй выљакан теттесене ытти аҫасене те парсан, ҫав теттесемпех, вӑйӑ пӗтӗмпе урӑхланса, илемленсе кайаҭ. Сӑмахран: меҫка, пӗҫӗк кусатӑрана пӗрин патӗнҫен теприн патне кустарса йарса выљаҫҫӗ, ҫавсенех иккӗн харӑс хӑваласа ҫуптарса ҫӳреҫҫӗ; меҫкӑна пӗрин патӗнҫен теприн патне персе панӑ ҫух ӳкерес мар тесе тӑрӑшаҫҫӗ; пӗҫӗк урапасем, ҫунасем ҫине йапаласем тийесе, вӗсене иккӗн-иккӗн туртса выљаҫҫӗ; йӑвӑҫ татӑкӗсенҫен ҫурт-йӗр тумаллисем хатӗрлеҫҫӗ; йуртан, хӑйӑртан, тӑмран ҫурт-йӗрсем тӑваҫҫӗ; темиҫен пухӑнса тӗрлӗрен шӑнкӑравсем ҫакса вӗсене илемлӗ, килӗшӳллӗ йантӑратакан туса выљаҫҫӗ, тата ытти те.

## Выљамалли уйрăм вăхăт.

Уйрăм вăхăт кăтартса памаллаи, кăтартса парас çуки, ăна калама йăвăр. Апат çиме, çывăрма, тумланма, çăвăнма, уçăлса çӳреме вăхăт иртерни-сĕр пуçне, ађа вăхăта вăйăра иртерет; ђас-ђасах тата çак асăннă ĕçсене тунă ђухне те выљаса илме тăрăшаť. Ађа хăй пĕђђен пулсан нихăçан та ывăнат-ђенех выљамасť. Анђах, хăш ђухне, йулташĕсемпе выљаса, пĕр-пĕринђен йулмасăр, ăмăртса, хавас-ланса пырса кăшкăрашса, йăсласа, пĕр вырăнта выљаманнипе ывăнса çитме пултараççĕ. Кун пек ђухне вара çитĕннисен ађасене лăплантарса урăх вăйă, урăх теттесем тупса пама тăрăшас пулаť. Мĕншĕн тесен, ађасем те вăйă выљаса, ытти ĕç тунă пекех, ывăнаççĕ. Çавăнпа вĕсене выљасан выљасан, кантарма тăрăшас пулаť. Çакна нихăçан та манма йурамасť.

## Харпăрхăй тунă тетте

Теттене килте тунă ђух ађа пăхса тăнă, курнă пулсан, йе ăна тунă ђухне хăй те пăртак ĕçленĕ пулсан, ађашĕн вара вăл йапала пуринђен хаклăн туйăнаť. Çитменнине тата килте, харпăрхăй тунă тетте йӳнерехе лараť, тунă ђухне те унта ђылай шухăш кĕртме пулаť. Йулашкинђен тата, ку теттене

килте хамăр тунă май, çирĕпрех йапаларан тăватпăр. Çавăнпа та аҫа аллине кирек хăçан пама та çĕмĕрĕлесрен-ватасран хăраса мĕн тăмалли çук.

Килте, хамăр тума пĕлмен теттесем, çуках та ёнтĕ вăл. Вĕсене пурне те тума пулатех. Пирус коропкисенҫен, шăрпăк (спиҫкă) коропкисенҫен хутсемпе çыпăçтарса пӳрт-çурт йевĕрлĕ йапаласем тума пулаť. Пĕрене пуçĕсемпе хăма пуçĕсенҫен, ытлашки пулса татса пăрахнă йапаласенҫен темĕн те тума пулаť: хутран, çĕтĕк-çатăкран — меҫкă тума йураť. Кантрасенҫен, кивĕ кĕрĕсенҫен хитрелетсе йавсан выљамалли тилхепесем, урлă сикмеллисем пулма пултараççĕ. Йăвăç йешҫĕксенҫен, пĕрене пуçĕсенҫен тĕрлĕрен урапасем, сĕтел-пукансем тума пулаť. Пысăкрах аҫасемпеле çӳхе хăмасенҫен çапса-çыпăçтарса повоскăсем те тума пулаť. Çавăн пекех пысăкрах, хăйсене ларса çӳремелли çунаурапасем те тума йураť. Çапла тĕрлĕрен кайăккĕшĕк, выљăх-ҫĕрлĕх кĕлеткисене те тума йăвăрах мар. Йăвантарса çӳремелли ҫăмăр йапаласене те çавăн пекех тумалла: варрине хăйăр, йе çĕтĕкçатăк тултарса çийелтен тĕрлĕрен улалатнă пусмапир татăкĕсемпе çĕлесе, питĕрсе çавăрăнмалла. Тĕрлĕрен патаксене-туйасене саваласа йакатса, вĕсен тăршшисене те тĕрлĕрен татса, çутă-йака сăрăсемпе сăрлама пулаť. Çав патаксене тĕрлĕрен вăйă выљанă çĕрте тыткалама йураť: вĕçĕсене

кусатрансем-кустӑрмасем ҫыхса тӑхӑнтарсан кустарса-ҫуптарса ҫӳремелли тетте пулать. Ҫав патаксенҫенех шыв армаҫ те, ҫил армаҫ те туса лартма йӑвӑрах мар, унта вара хулӑм хутсене те, хӑйӑсене те, тимӗр пӑтасене, йӑвӑҫ пӑтасене те ӗҫе кӗртмелле пулать. Пӗр сӑмахпа каласан: килтех те ҫылай тӗрлӗрен йапаласем тума пулать. Ҫавӑнпа нихӑҫан та, тума пӗлменни ҫине персе пӑрӑнса кайма йурамасть: асӑрхӑрха аҫасем нимӗн пӗлмесӗрех шаккаҫҫӗ, ҫапаҫҫӗ, ҫыпӑҫтараҫҫӗ, ҫавах та мӗн те пулин туса хураҫҫех. Ку ӗнтӗ ашшӗ-амӗшӗнне те, ыттисенне те шухӑша пӗр ҫӗре пухса пӗтӗм ҫуна хӗпӗртеттерекен, савӑнтаракан йапала пулса тӑрать.

Аҫа теттепеле выҫассине пӑрахса ҫӑн ӗҫе хӑҫан тытӑнасси ҫинҫен калама та йӑвӑр. Вӑл хӑйӗн вӑйӑ вӑхӑтӗнҫех ӗҫлӗ вырӑнсем нумай тупма пултарать: меҫкӑ ваҫҫи сӗреке ҫыхать-тӑвать; кирек ӑҫтан тата-тата пӑрахнӑ йапаласене, хӑйӑрсене, ҫулсене, хутсене, кӗленҫе татӑкӗсене пуҫтарса хума хӑма татӑкӗсенҫен ҫапа-ҫапа арҫа тӑвать; йалавсем тума хутсем касать: хутсенҫенех касса тӑхӑнмалли тумтирсем, ҫӗлӗх-картуссем ҫӗлет; кил хушшинҫе, йе пахҫасенҫе вӑйӑ выҫамалли тенкел-пукансем тӑвать; пахҫа ӑшҫиккисене, килкартисене шӑлма шӑпӑрсем ҫыхса хурать, тата ытти йапаласене те нумай тӑвать. Ҫитӗннӗ ҫынсен вара аҫа ҫак йапаласене тунӑ ҫухне, вӗсене тума кирлӗ

инструмĕнтсене йурăхлипе йурăхлă маррине асăрхаса тăрас пулаҭ. Инструмĕнтсене йаланах ҫивĕђ, ĕҫе йурăхлă, ађа йуратмалла усрама тăрăшас пулаҭ.

## Ађасене мĕнле теттесем йурамаҫҫĕ.

Ађасене, хăмасем ҫине ахаљ тунă инструмĕнтсене илсе, туса пама йурамасҭ. Вĕсемпе ађа мĕнле ĕҫ тумаллине тума пултараймасҭ: ун пек йапаласем ђасах ҫĕмĕрĕлсе-ванса кайаҫҫĕ те, ађа вара тарăхса кайаҭ. унăн ĕҫлес килми пулаҭ, вăл ĕҫрен сивĕнет

Ҫавăн пекех, ĕҫлеме йурăхсăр, выљама кăна тунă: кĕреҫесем, туртса ҫӳремелли пĕђĕкҫĕ урапасем, йăвăҫ-курăк шăвармалли витресем, кашăк ҫăпаласем ађана йурамаҫҫĕ.

Ађа ун пек пĕђĕкҫеҫ, выљама кăна тунă йапаласемпе ĕҫлеме пултараймасҭ. Ађана ђăн-ђăн йапаласемех илсе, туса парас пулаҭ, вăл вĕсемпеле ĕҫлеме те пултартăр. Анђах вăл йапаласен йăвăрăшĕ те, пысăкăшĕ те ађа вăйне кура пултăр. Сăмахран: тимĕр мăлатук, ҫăка йăвăҫран тунă кĕреҫе, вăл кĕреҫе ăна лăпах хулхушши айне ҫититђен пултăр; тимĕр витри йăвăҫ татăкĕсенђен кăна тунăскер ан пултăр, унпала ађа шыв ҫĕклеме пултартăр Витрисем ҫиђ-сакăр ҫулхи ађанăн пĕр ђетвĕртрен ытларах кĕрекен пулмалла.

Ҫавăн пекех тата теттесене: машшин, йе урăх йапаласем ђăн-ђăнах хăйсем йевĕрлĕ, сăвотит

туса йарсан, хăйсемех çӳреме пултараканнисем те йурасах каймаççĕ. Вĕсене ађасем малтанах йуратаççĕ пулсан та, кайрантарах, хăйсем пĕрмайах пĕр пек çавăрăннипе ађасене ђасах йăлăхтараççĕ. Мĕншĕн тесен, ађа ун пек теттепеле выљанă ђухне хăй ĕçлесе, хăй вăйне унта параймасť; правуса ађи пĕр çĕрелле тĕкесшĕн, правусĕ хăйех кайакан-скер, тепĕр çĕрелле ђупаť. Выљамалли ђăххисем пĕр вырăнта пĕр пĕрђех сăхса тăраççĕ, ку та ађасене ђас ывăнтаракан, йăлăхтаракан йапала. Ун пек харпăрхăй çӳрекен теттесене, мĕнле тунине ађа пĕлеймест: ватса-çĕмĕрсе пăхаť те, ывăтса йараť. Хăйхи тетте пĕтет те вара, ун çинђен ађа манса та кайаť.

Хăйсемех, сăвотит тунипе, çӳрекен теттесенђен те ађана килĕшекенсем пулма пултараççĕ. Вĕсенђен хăшĕ-пĕрисем питĕ те çăмăл ăнланмалла тунисем пулаççĕ, ађа вĕсене тытсан алран та йама пĕлмест, ун пек теттесем ђылайђђен йăпантараççĕ вара ађана, мĕншĕн тесен ађа вĕсем мĕнле çавăрăннине мĕнле ĕçленине, мĕнле ђупнине те сасартăках ђăн-, ласа-ђухласа илме пултараť. Ђăнахах та вĕсем те ытла çирĕпех мар, вĕсем те ванма пултараççĕ, анђах кунта ађасем вĕсене йуратнине асăрхаса, вĕсене тирпейлĕ тыткалама вĕрентес пулаť. Çавăн пек теттесенђен: сăрăпала сăрласа пралук çине тунă илемлетнĕ пулă, ђăн-ђăн пулă йевĕрлех, тата винтăллă туйа çине çаврака шĕвĕр (пуç) тимĕр тăхăнтартса

çӳлелле хăпартса выђакан тетте; унтан тата хăма татăкĕ çинђе кутăн-пуçăн сиккелекен пукане— çавнашкал теттесем ађасене йăпатма пултараççех. Ун пек теттесене çулла пасарсенђе, йармăккăсенђе сутаççĕ.

Анђах пасарсенђе, йармăккăсенђе сутса çӳрекен теттесенђен йурăхсăррисем те ђылайах пулаççĕ. Сăмахран: çĕтĕк-çурăксенђен тунă нимĕн килĕшӳсĕр сăн-пуçлă пуканесем, хытă хутран тунă вĕçен кайăксем, тăмран тунисем, тискер кайăксем, ылтăнпа кĕмĕлпе сăрласа пĕтернĕ тискер çĕленсем, темĕн те пĕр сутаççĕ.

Тата тĕрлĕ сăрсемпелле илемлетсе сăрласа пĕтернĕ тетте премĕксем те пур. Вĕсем те йурăхсăр теттесем, мĕншĕн тесен, тĕрлĕ усал сăрăсемпе сăрласа пĕтерсе çимелли —тетте тунă. Тетте вăл выђамалли йапала, çимелли мар, çакна нихăçан та манма йурамасть. Выђамалли теттесем вĕсем выђамалли йапала кăна та мар, ађасен ĕç хатĕрĕ те пулса тăраççĕ. Çакна та йаланах асра тытмалла.

## Пăртак пысăкланарах панă ађасен вăййи.

Ку таранђђен асăннă теттесем пурте 4—5 çула çитиђенхи ађасем вађђи шутланаççĕ, çав теттесемех 5—6—7 çулхи ађасене те кирлĕ, вĕсем те çав теттесемпех выђаççĕ. Анђах пысăкланарах панă ађа

вăл теттесемпе урăхларах выљаť, сăмахран: пуканене вăл хăй тунă йапаласем çине илемлĕхшĕн лартаť.

Тата унăн вăйă интересĕ кăна пулмасť, вăл вăййа хăй пуçласа йарса, вăййа пурнăçпа çыхăнтарса, пуринђен ытла хăй курса пурăнакан, унăн таврашĕнђе пулса иртекен йапаласемпе çыхăнтарма тытăнаť. Сăмахран: вăл ађа çуртне, ађа пахђине çӳрет пулсан—çав вăййа выљаť; кил таврашĕнђе ашшĕ-амăшсем тăвакан ĕçсене, йе хăйсене çывăхри çынсем ĕçлекен ĕçсене тума тытăнаť. Ку вăхăтра ађа нумай теттесем вăййа хутшăнтарса, вăййине тĕрлĕрен выљама тытăнаť, ђылайĕшне хăйех тăваť, хăйех çыпăçтараť, çав вăхăтрах хăйĕн йулташĕсене те вăййа хутшăнтарма, вăйă ĕçне туртма тăрăшаť. Çапла вĕсен ĕç пĕрлешĕвĕ пулса тăраť.

5—7 çулхи ађасем 3—5 çулхи ађасенђен нумай уйрăм тăраççĕ. Çав вăхăтра ађа çивĕђленсе, матурланса кайаť. Вăл кирек ăçта хăпарса кайаť, картасем урлă каçма йуратаť. Нумай ђупасшăн. Çавăн пекех вăл вăйăсене те хăй шухăшласа кăларма, хăйне кирлĕ пек туса пыма тăрăшаť. Вăйăра мĕнле йапаласем кирлине суйласа илме вĕренет. Мĕнле йапаласем йурăхлине ђухлакан пулаť. Çавăнпа та ађа шкул çулне çите пуçласан кирек мĕн курнă, çавна пуçтарма йуратакан пулаť. Ађашăн ку вăхăт улшăну вăхăђĕ шутланаť. Кирек йепле хитререх йапаласене

3—5 çулхисем те пуçтарса илме йуратаççĕ. Анђах пуçтарса хурса, усрама пĕлеймеççĕ: ђĕрсе çĕтсе, çĕмĕрсе, вакласа тăкма хăтланаççĕ. 5—7 çула çитнĕ ађасем çапла тумаççĕ. Вĕсем пуçтарнă йапаласене йе пуçтарса, йе пытарса хума тăрăшаççĕ. Çавăнпа та вара, çытмасене хывса, кăсйаллă йĕмсем тăхăнакан пулсан вĕсен кăсйисем туллийех çӳреççĕ. Унта вĕсен: супăњ хуђĕ, канхвет хуђĕ, çпиђкă арђи, пирус коропки, хуршăмми, тĕрлĕ тĕслĕ курăнакан кĕленђе катăккисем, тимĕр таткисем, темĕн те пур. Çак йапаласене вĕсем вăхăтран вăхăта кăлара кăлара пăхаççĕ. Вĕсене пахалаççĕ. Кăсйасенђе йăгса çӳреме кансĕррине асăрхаса пĕр-пĕр кивĕ арђасем çине, йе пăрахăç ђĕрессем çине пуçтарса хураççĕ. Пĕрпĕринпе танаштарса, пĕрпĕринне пахалаççĕ. Йăвăрăшне, хулăмăшне, сарлакăшне, пахаллăхне хак хума вĕренеççĕ. Пĕрпĕринпелле улăштарса илеççĕ.

Ађасем пухакан кашни йапалла, пурнăçра тĕл пулакан ђăн-ђăн йапалана пĕлтерет. Çав йапаласемпе выљанă ђухне те вĕсем çав шутпах выљаççĕ. Сăмахран: тĕрлĕрен хитре тĕрĕллĕ хутсем: çитсăсем, тутăрсем, саппунсем вырăнне пулаççĕ, кĕленђе катăкĕсем—укçа вырăнне; çырнă хутсенђен кĕнекесем, тетрађсем çĕлеççĕ. Акă вĕсен копператтив вăййи пуçланса кайађ. Пĕри хăйĕн йапалисем патĕнђе тăрађ. Ку прикашђĕк ĕнтĕ. Унăн патне илекенсем пыраççĕ.

— Çак тутăр мĕн хак тăрать?—тесе ыйтать çакăнса тăракан илемлĕ хута, йе пĕр пĕр тутăр татăкне кăтартса.

— Пĕр тенкĕ...

— Ме çур тенкĕ...

— Кунта копператтив. Хакшăн тавлашмаççĕ. Тавар илекен йапалине илет те, ун вырăнне укçа парса хăварать. Куна вĕсем çитĕннĕ çынсем тунă пекех тăваççĕ, кулаççĕ. Ытлашши калаçмаççĕ. Мĕншĕн тесен, копператтивра çавăн пек ĕçлеççĕ. Çапла вара аҕасем вăйăпала ĕçе хăнăхса, пĕрлешӳллĕ ушкăна çыхăнса пыраççĕ. Кăсене вĕсем хăйсем те асăрхамаççĕ. Анҕах вăл пурнăçшăн та çаплах тăрса йулать.

Аҕасем выҕанă ҕухне çитĕннĕ çынсен ҕунĕ савăнса тăрать. Епĕ Нурăсри аҕа çуртĕнҕе ĕçленĕ вăхăта нимĕнле те манма пултараймастăп. Манăн пуça питĕ те çирĕп вырнаçнă вăл. Аҕасем мĕнпеле интересленнине, вĕсем мĕнпеле выҕанине сăнарăм епĕ. Пĕрре пасарла выҕаççĕ. Копператтив пур. Çавсемпе пĕрлех усламăç тутарсем пур. Йăванпала Йекор йатлăскерсем усламăç тутарсем пулнă. Хăйсен лавкисенҕе сутă тăваççĕ. Вĕсем ҕăнахах та тутар йевĕрлех. Сăнĕсем те тутар сăнĕ пур. Калаçасса та тутар пекех калаçаççĕ. Копператтивра сутă тăвакане Роман, уксакскер, йăваш аҕа. 43 аҕаҕҕĕ вăл вăхăтра аҕа çуртĕнҕе.

Килкартишĕнҫе ҫăн-ҫăн пасар пек йĕшĕлтетеççĕ. Йăванпала Йекор хăйсем патне темĕн пек ҫĕнеççĕ. Анҫах тавар илекен «халăх» вĕсем патне пымасť, копператтивах утаť.

Нурăсра пасар пулатҫĕ. Аҫасен вăййине асра тытсах пасарта асăрхаса çÿретĕп. Рахматтуллинпа Сайфуллин тутарсем—усламçăсем хăйсен лавкисенҫе сăвотит тунă машшин пек, ҫăн-ҫăн Йăванпала Йекорах ĕнтĕ, çатăлтатса тăраççĕ. Анҫах таварĕсене илекен çынсем ытлах мар. Çавăнтах инвалитсен лавккинҫе кĕме-тухма çук çын. Вăл лавккара ун ҫухне прикашҫĕкре инвалит-уксаскер, йăвашскер, Петĕр Йăванҫ Романăв йатлăскер ĕçлетҫĕ.

Тĕлĕнсе кайрăм. Аҫасем çавсене пĕтĕмпех сăнаса çÿренĕ. Копператтивра прикашҫĕк уксаккине курнă та, вĕсем хăйсен вăйăри копператтивне те уксак прикашҫĕк лартнă. Çынсем тавар ăçта ытларах илнине те йăлтах сăнанă. Тутарсене те сăнамасăр хăварман. Çакăнтан ĕнтĕ: аҫасем хăйсен вăййисене таврари ĕçрен, хамăр пурнăçран илсе выљани лайах палăраť. Пĕрлешÿллĕ ĕçе те çаплах вĕренеççĕ.

Шкула кайас çулсем çите пуçласан аҫа вăйăра ахаљ çеç хускалмасť, кирек мĕне те ахаљ кăна тумасť, мĕн те пулин тумаллинех тăвас, ĕçĕн вĕçне çитсе йапалине туса курас тесе тăваť. Çакăн

пек ђух ађана çитĕннисен паллăнах пулăшса пымалла. Çакăн пек ђух вара ађасем сăвотит туса йарсан хăйсемех çӳрекен йапаласене — теттесене пăхмаççĕ, йуратмаççĕ; мĕншĕн тесен, хăйсемех çӳреме-çаварăнма пултаракан теттесем ађана хăйсем çумне ĕçе йертме, ĕçе хутшăнтарма пултараймаççĕ. Ађа вĕсене пĕрре çаварса йараť те, урăх унăн вара ĕçлемелли те йулмасť, пăхаť-пăхаť те вăййине те пăрахаť, мĕншĕн тесен, вăл ĕççĕр тăма пултараймасť.

Ађасем пĕр-пĕринпе йапаласем улăштарса илме, пасарла выљама йуратаççĕ, терĕмĕр. Хутсенђен, çĕтĕк-çурăксенђен, хăма татăкĕсенђен, ђулсенђен, кĕленђе катăкĕсенђен, çĕпре амăшĕсенђен, шапа хуранĕсенђен, тата çавăн пек ытти йапаласенђен вĕсем таварсем тăваççĕ. Укçисем те вĕсен çав йапаласенђенех пулаççĕ. Кунта вĕсем йапалисене укçалла илнĕ пек тăваççĕ, тата пĕр-пĕринне хак хурса ахаљ те улăштарса илеççĕ. Çавăнпа ађасен аллине нихăçан та укçа пама йурамасť. Мĕншĕн тесен, вĕсен хăйсен вăййине ђăн-ђăн укçапа выљама, йапаласене ђăн-ђăн укçапа парса-илме, сутма тытăнаççĕ. Вара ађасем вăййа хăйсен вăййи ĕçĕ вырăнне хурса выљамаççĕ, укçашăн кăна выљакан пулаççĕ. Çакăнтанах ађасем пĕрпĕрне улталама, лартма вĕренеççĕ. Çакăнтанах ашшĕ-амăшĕсен кăсйисене çаратма та вĕренеççĕ. Ĕçлес-выљас тесе

шухăшламаççĕ. Вĕсен мĕн пур шухăшĕ те: ултаafters, вăрлас, çаратас—укçа тупас шухăш пулаť. Çак хăнăху ӳссен те çаплипех тăрса йулма пултараť. Ку—пурнăçшăн сийенлĕ пулаť.

Çаксене çитĕннисен, ашшĕ-амăшĕсен йаланах асра çирĕп тытса тăмалла, манмалла мар.

## Вăйă майĕпе ĕçе вĕренесси.

Паçăрах: аҫасем хăйсем курнине, илтнине тума йуратаççĕ, терĕмĕр. Апла пулсан еппин вĕсем çитĕннисене, ашшĕ-амăшне хăйсем вăйĕ çитнĕ таран ĕçре пулăшса пыма та пултараççĕ. Çавăнпа та аҫасем пĕҫĕкренех ашшĕ-амăшĕсем ĕçленĕ çĕрте йавăçса çӳреме йуратаççĕ. Амăшĕ çăкăр пĕçерме хатĕрленет пулсан, аҫи те çавăнтах çӳрет. Амăшĕ йашка пĕçерме улма шуратаť, йе улма тураť пулсан, йе купăста иртет пулсан—аҫа кирек хăçан та çавăнта çӳрет. Вăл амăшне пулăшасшăн, ĕçлесшĕн вĕтеленет. Амăшĕ хыпаланҫăкрах çын пулсассăн аҫине кансĕрленĕшĕн йатласа, хуса йараť. Аҫи куншăн кăмăлсăр пулса, пĕрпĕр кĕтессе кайса лараť. Амăшĕ çине хурланлă сăнлă пăхаť. Унăн пĕтĕм кăмăлĕ хуçăлаť. Çакăнтанах ĕçрен сивĕнсе, урăх кирлĕ мар йапаласемпе выҫама тытăнаť. Кайран—хушсан та итлеми пулаť. Вăйăра ăна амăшĕ ĕçленĕ ĕç интереслемест. Уншăн пула

ытти ађасем выђакан вăйă та çавах. Ађасем пăсăлни çакăнтанах та пулма пулгарат̆.

Ађана хисеплекен, ађана килĕштерекен, ађана вашават, ађа ăспуçне пĕлекен амăшĕ ађана хăйпе пĕрле питĕ те лайăх ĕçлеттерме пĕлет. Ађа ĕçлесшĕннине кура вăл ăна пĕђĕк ĕç тупса парат̆. Хăй йашка хатĕрлет пулсан, ађи унта тăнине курса, ĕçлесшĕннине сиссе, улма шуратма, йе купăста иртме хушат̆. Ађа ĕçе тытăнат̆. Амăшĕ ађа ĕçлейменнине курат̆: йе улмана хулăм шуратат̆, йе улма куçĕсене çаплипех хăварат̆. Амăшĕ вара ађине унтан йатлаçса-вăрçса мар (ывăнтăн пуђ, ађам), йе (ыран лайăх улмасем парăп, пайан улмисем лайăхах марха), тесе ађана илĕртсе йарат̆. Кун пек каланипе ађа кирек хăçан та килĕшет, тавлашмаст̆. Амăшĕнђен хĕпĕртесе уйăрлат̆. Вăл пайан ĕçленине ыранђђен манмаст̆. „Ыран лайăх улмасем парăп“, тенине асра тытат̆. Çавăнпа та вăл амăшне пулăшма ыран татах пырат̆. Çапла вара ађа куллен-кун ĕçлекен пĕђĕх ĕç вăйĕ пулса тăрат̆, ађа ĕçе йуратса, ĕçе хăнăхса пырат̆.

Кăмакара вутă çуннă ђухне, амăшĕ ађана вутсыппи çĕклесе кĕме хушат̆. Ађа хĕпĕртесе йатса кĕрет. Хăй ĕçне, хăй вăйпе виçет: «пĕртте йăвăр мар, йе ох, йăвăр, йе çавах йăтрăм» тет. Çавăн пекех вăл хăй ĕçленине урăх çынсене те каласа кăтартма йуратат̆. Хăйне хăй ĕçлекен çын вырăнне

хурат̌. Еçлекен çын ĕççĕр пурăнмаст̌. Çапла вара ађа та пăрмайах ĕçлекен пулат̌. Çак хăнăху пурнăçра та çаплипех йулат̌.

Ађа çавăн пек ĕçленĕ вăхăтра ĕçе анђах хăнăхса пымаст̌, хăй таврашĕнђи йапаласене те вĕренсех пырат̌. Унăн алли йапалана йăтса, туртса пăхса йăвăрăшне ђухлама; хыпаласа пăхса йакапа йакамарне пĕлме вĕренет. Куçĕпе пăхса тасапа тасамарне, ђиперпе ђипермарне сăнат̌, çавăнтах пысăкăшне, хулăмăшне, сарлакăшне те асăрхаса вĕренсе пырат̌.

Мĕнле йапала мĕншĕн кирлине астăвакан, пĕлекен пулат̌. Ку ĕнтĕ пурнăçра питĕ кирлĕ йапала вырăнне щутланат̌. Вăл çапла пулмалла та ĕнтĕ. Çапла епĕр вăйăранах, пĕђĕк ĕçренех ађасене ĕçе йуратакан, сăнакан, килĕшӳллĕ, пĕрлешӳллĕ ĕççынни туса хуратпăр.

## Ађа çитĕнтерекен çемйе—примерлă çемйе пулмалла.

Ађасем хамăр таврари лайăх йапаласене, ырă ĕçсене вăйăпа вĕренсе пынă вăхăтрах етеме йурăхсăр вăйăсене—ĕçсене те выђаса, вĕренсе пыма пултараççĕ. Сăмахран: ађасем ђас-ђасах çемйери вăрçăллă, ӳсĕр çынсем пек, пĕр-пĕринпе вăрçмалла, харкашмалла выђаççĕ. Кăсем те ĕнтĕ пурнăçран илнĕ хăнăхусем. „Çын пуласси—ађаран паллă; лаша

пуласси—ҭыхаран паллӑ“ теҫҫӗ. Ҫавӑн пекех, ҫав хӑнӑхусем ађасене пурнӑҫ тӑрӑшне те йулма пултараҫҫӗ. Етем пурнӑҫӗнђе ку ӗҫсенђен йурӑхлӑ йапаласем пулма пултарайманҫҫӗ. Вӑл ӗҫсене тӑвакан ҫын—гӗнђере пур киревсӗр ӗҫсене тума та хатӗр. Ун пек ҫын пирӗн сотсиалисӑмӑн ҫемйинђен уйрӑм тӑраҭ. Ун пек ҫын пирӗн ҫемйере кирлӗ мар.

Ђас-ђасах епӗр хамӑр ҫемйере, ађасен куҫ умӗнђех, йатлаҫса-вӑрҫса илме те вӑтанмастпӑр. Ађасем пирӗн хыҫҫӑн вӑл вӑййа вӑрттӑн ҫӗрте те пулин выђаса илеҫҫех. Йе тата ађасен куҫ умӗнђех ӗҫкӗ ӗҫсе хӑтланатпӑр. Ҫакӑ та ађасен вӑййине кӗрет. Ҫаксенђен пуринђен те сыхланмалла.

Хӑш-пӗр ҫемйе пигӗ те тӗплӗ пурӑнаҭ пулин те, ађисем ҫине ҫавӑрӑнса пӑхмасҭ. Ађисем вара мӗнле кирлӗ ҫапла ҫӳреҫҫӗ. Ашшӗ—амӑшӗ ҫине шанаҭ, амӑшӗ – ашшӗ ҫине шанаҭ. Ађисем киле тавӑрӑнмасӑр кунӗ-кунӗпе таҫта ҫӳреҫҫӗ. Хӑйсен ҫемйинђе лӑпкӑ, лайӑх пурӑнаҫҫӗ пулин те урӑх, йут ҫемйесене кайса, ђарусӑр, йе пире кирлӗ мар ҫынсен ађисемпе хутшӑнса выђаса вӗсен пурнӑҫне, вӗсен хӑнӑхӑвне тавҫӑрса илеҫҫӗ. Ашшӗ амӑшӗ ҫаксене сисе тӑркађах ађасене киле тавӑрӑнсан, вӗсемпе ҫыхланма йураманни, апла выђама йураманни ҫинђен тӗплӗн ӑнлантарса памасҭ. Ку ӗнтӗ ађапђа ҫитӗнтернӗ ҫӗрте пысӑкран та пысӑк ҫитменлӗх, ашшӗ-амӑшӗ ҫине тийенекен мӑн айӑп пулаҭ,

Аҕапҕа çитĕнтерекен çемйе—примерлă çемйе пулмалла. Ашшĕ-амăшĕн пĕр пулса аҕапҕана лайăх пăхса, пурнăçра кирлĕ вăйă йапалисем, ĕç хăнăхĕвĕсем тупса памалла, йаланах асăрхаса сотсиалисăм çемйинҕе кирлĕ, усăллă çын тума тăрăшмалла. Асăрхаса, тăрăшса ĕçлесен ку ĕçе тума пулатех. Çакна йаланах асра тытмалла: аҕана лайăх пăхса çитĕнтерменни, вăл—пирĕн çине тиӳенекен пысăкран та пысăк айăп пулать!

# ТУПМАЛЛИ.


*Стр.*

Теттесем мӗншӗн кирлӗ . . . . . . . . . . . . . . . . 3
Вӑйӑра ђӑрмантармалла мар . . . . . . . . . . . . . . 6
Ађана хӑйне шухӑшлаттармалла . . . . . . . . . . —
Ађана мӗнле теттесем кирлӗ . . . . . . . . . . . . 8
Пысӑк теттесемпе пӗђӗк теттесем . . . . . . . . 9
Пуканесемпе выђӑх йевӗрлӗ теттесем . . . . . . 10
Теттесен вырӑнӗ . . . . . . . . . . . . . . . . . 13
Ваннӑ теттесем ҫинђен . . . . . . . . . . . . . . 14
Выђамалли уйрӑм вӑхӑт . . . . . . . . . . . . . . 16
Харпӑрхӑй тунӑ тетте . . . . . . . . . . . . . . . —
Ађасене мӗнле теттесем йурамаҫҫӗ . . . . . . . . 19
Пӑртак пысӑкланарах панӑ ађасен вӑйии . . . . . 21
Вӑйӑ майӗпе ӗҫе вӗренесси . . . . . . . . . . . . 27
Ађа ҫитӗнтерекен ҫемйе—примерлӑ ҫемйе пулмалла 29

## ЂĂВАШ КĔНЕКИ УЙРĂМĔ
### ШУПАШКАР ХУЛИ

**Кам Хĕрлĕ çарпа Совет Сойусĕ тĕреклĕхĕшĕн — çавсене çак кĕнекесене вулама сĕнетпĕр!**

**Холков**—Хĕрлĕ çарăн пурнăçĕ . . . . . . . 20 пус

**Мауэр**—Çуран çарпа унăн вăрçă ђухнехи ĕçĕ 22 „

**Литовцев**—Техниккă вăрçăра . . . . . . . 22 „

**Литовцев**—Пољшăпа унăн çарĕ . . . . . . 9 „

**Белов**—Винттовккăна тĕл туса пеме мĕнле вĕренмелле . . . . . . . . . . . . . 22 пус

**Штерн**—Хĕрлĕ çарти тистиплинă тата хисепленисемпе наккасанисем . . . . . . 8 пус

**Авиновитский**—Проттивокассем, вĕсене мĕнле тунă тата мĕнле тыткаламалла . . . 20 пус

**В. И. Ленин**—Тĕнђери лару-тăру, вăрçă тата Хĕрлĕ çар çинђен калани . . . . . 6 пус

**Тарасов**—Осоавиахим йалхуçалăхне сийен кӳрекенсемпе кĕрешнĕ çĕрте . . . . 15 пус

**Верушкин**—Вĕлермелли йапаласем, вĕсенђен хӳтĕленесси . . . . . . . . . 15 пус

ПСК (п)П-ин Хĕрлĕ çарти йађейккисем ĕçлемелли инструкси . . . . . . . . . 20 пус

Комсомолăн Хĕрлĕ çарта ĕçлемелли положени . . . . . . . . . . . . . 15 пус

**Б. Львов**—Çуран çар—тĕп çар . . . . . . . 65 „

Хакĕ 10 пус

Ç. Шăпçăк. ДЕТСКИЕ ИГРУШКИ.

Издание ЧУВАШНАРКОМПРОСА
Чебоксары — 1930